Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

48 (8009) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Çамрăк çемье свидетельствăна тивĕçрĕ

Патшалăх пулăшăвĕ



***Ильинка ял тăрăхĕнчи Ойкасри Корнеевсен çемйине чăннипех те туслă та телейлĕ çемье теме пулать. Мĕншĕн тесен çемьере йыш хушăнни яланах пĕлтерĕшлĕ те паллă самант, çĕнĕ пепке кун çути курни пысăк савăнăç, телей.***

***Алевтина Витальевнăпа Петр Николаевичăн вара савăнма сăлтав çук мар. Туслă çемьере икĕ хĕр – Кристинăпа Дарья – ӳсет. Çитменнине ача-пăчаллă çемьесем тĕлĕшпе патшалăх тимлĕхе ӳстерсе пыни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăрттăнлăх мар, çамрăкла çемье тĕвĕлесе ура çине тăма çăмăлах мар. Кунта вара патшалăх пулăшăвĕ – пысăк тĕкĕ. Пулăшусен шутĕнче йышлă çемьесене çурт-йĕр çавăрма çĕр участокĕ тӳлевсĕр уйăрса пани те, çăмăллатнă майпа кредитсем уйăрни те, çамрăк специалистсене, çамрăк çемьесене паракан тĕрлĕ енлĕ пулăшу мелĕ те.***

***Çемье пуçĕ Петр Николаевич «Сеспель» предприятире тăрăшать. Вăл кунти ăста слесарьсенчен пĕри. Алевтина Витальевна вара – пуçламăш классен учительници, «Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача сачĕ» муниципаллă бюджет вĕрентӳ учрежденийĕнче вăй хурать.***

***Ойкасри Корнеевсемшĕн (сăн ӳкерчĕкре) савăнăç мăшăррăн килчĕ, пĕрре вĕсем çемьере йыш хушăннине уявланăччĕ, нумаях пулмасть вара ача амăшĕн (çемье) капиталĕн свидетельствине илчĕç.***

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

## Республика кунне уявланин пĕтĕмлетĕвĕсем

Июнĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Республика кунне уявланине пĕтĕмлетнĕ.

Шупашкарти пиллĕкмĕш экономика форумне 1000 ытла ĕçлĕ çын хутшăннă. Çав шутра – Раççей Экономика аталанăвĕн министерствин, Федерацин ăсхакăл харпăрлăхĕ енĕпе ĕçлекен служба представителĕсем, РФ Патшалăх Думин депутачĕсем, Раççей 19 субъекчĕн ĕç тăвакан влаç органĕсемпе организацийĕсен, 9 ют патшалăх представителĕсем.

«Регионсем: чикĕсĕр ĕçтешлĕх» курав та ăнăçлă иртнĕ. Унта Раççейăн 13 субъектĕнчи тата Италири 228 организаци хутшăннă, 60 пин ытла çын пырса курнă.

Форум пĕтĕмлетĕвĕсенчен пĕри – Шупашкарта Технологисемпе инновацисене пулăшакан центр уçасси çинчен йышăну туни.

ЧР Министрсен Кабинечĕпе «РусГидро» ОАО 2012–2016 çулсенче килĕштерсе ĕçлесси çинчен килĕшĕве алă пуснă. Çак вăхăтра Шупашкар ГЭСне юсама тата çĕнетме 1 млрд та 30 млн тенкĕ явăçтараççĕ. Çавăн пекех правительство «ЛУКОЙЛ-Волганефтепродукт» ООО килĕшӳ çырнă. Шупашкарти Б. Хмельницкий урамĕнчи микрорайона çĕнетме 2 млрд тенкĕ кредита явăçтарма «СУОР» компанисен ушкăнĕпе тата Перекет банкĕпе килĕшӳ тунă.

Куравпа форум пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх 3,5 млрд тенкĕлĕх килĕшӳсене алă пуснă.

Республика кунĕн культура программи яланхи пекех пуян пулнă. Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн «Раççей çăл куçĕсем» çирĕммĕш фестивалĕ, ал ĕç ăстисен «Ăстасен Руçĕ» вуннăмĕш фестивалĕ, пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ, ЧР наци культура пĕрлешĕвĕсен пултарулăх коллективĕсен «Туслăх кăшăлĕ» вунпĕрмĕш фестивалĕ, «Сăрпа Çавал кĕввисем» фольклор фестивалĕн гала-концерчĕсем, «Çĕр пин юрăпа ташă çĕр-шывĕнче» юрăпа ташă ансамблĕсен конкурсĕ, «Чăваш Ен кĕввисем - Çĕнĕ Юхăм» эстрада юрăçисен конкурсĕ, республикăри художество пултарулăх коллективĕсен тата чĕннĕ çăлтăрсен концерчĕсем иртнĕ.

«Раççей çăл куçĕсем» фестивале Раççейри 38 регионти 42 пултарулăх коллективĕ, Беларуçри 2 коллектив – 1000 яхăн хăна – хутшăннă. Республикăри 200 ытла коллектив та уявра хăйсене кăтартнă.

Раççейре

## Сăра сутма, ĕçме чараççĕ

2011 çулта Дмитрий Медведев федераллă саккунпа сăрана алкогольпе танлаштарчĕ. Сăра сутма тата ĕçме чаракан мерăсем кăçал июлĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕреççĕ. Ăна ларексемпе палаткăсенче, шкулсем, больницăсем, спорт площадкисем çывăхĕнче сутма юрамасть. Сăрана парксемпе пасарсенче, аэропортсемпе вокзалсенче, подъездсемпе лифтсенче тата çынсем пухăнакан ытти вырăнсенче ĕçме юрамасть. Çак напитока малашне е килте, е кафепе ресторанта астивмелле пулать.

Раççей тĕп санитари врачĕ Геннадий Онищенко шучĕпе сăра ĕçме чарни пысăк усă кӳмелле, çынсем ытларах çемьесемпе пулĕç.

РФ Сывлăх сыхлав министерстви пĕлтернĕ тăрăх çĕршыври 2 миллион çын алкогольсĕр пурăнаймасть, 30 миллионĕ тăтăш ĕçет. Вăхăтсăр вилекенсен 12 проценчĕ эрехе пула пурнăçран уйрăлать.

Паян-ыран çырăнмалла

**Хисеплĕ вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июль уйăхĕнчен илсе тăма çырăнма манман-и?**

**Васкăр, шутлă кунсем юлчĕç. Паян-ыран почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр!**

**Райхаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

Уй-хир хыпарĕсем

## Çум курăкне хирĕç

Ыранхи кунпа пурăнакан хресчен паян симĕс ĕç çипе кĕрешсех акнă-лартнă культурăсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессине те иккĕмĕш вырăна хăвармасть. Ĕнерхи кун тĕлне хуçалăхсем тыр-пул лаптăкĕн 10057 гектарĕ (78 процент) çинчи çум курăкĕпе кĕрешсе гербицид сапнă.

Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем 1000 гектар çинчи çĕр улми речĕсене кăпкалатнă. Кунта «Ударник», «ВаСем» хуçалăхсем пуçаруллăрах.

## 50 процент утă пур

Ут çи вăй илнĕ вăхăт. Оперативлă кăтартусене пăхсан çĕр ĕçченĕ район шайĕпе утă хатĕрлес плана 50 процента çитернĕ. Çак ĕçе Чкалов яч. хис. (293 процент), «Колос» АПФ (250 процент), Е. Андреев яч. хис. (174 процент), Суворов яч. хис. (108 процент), «Свобода» (95 процент) хуçалăхсенче лайăх йĕркеленĕ.

## Сенаж хываççĕ

Планпа пăхнă 16830 тонна сенажран çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне «Ударник» хуçалăхра çеç сенаж хывма пуçланă. Йӳçкассинчи сĕт ферминче висĕм кун 100 тонна сенаж янтăланă. Çывăх кунсенче ку ĕçсем ытларах вăй илесси пирки иккĕленӳ çук. Хуçалăхсен кăçал çавăн пекех 19137 тонна силос янтăламалла.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Паян – Çамрăксен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂК ЮЛТАШСЕМ!**

Сире пĕтĕм чун-чĕререн Çамрăксен кунĕпе саламлатăп!

Эпир 21 ĕмĕрте, тĕнче улшăнса пынă, инновацилĕхпе хăйне евĕрлĕх обществăна ăнăçлă аталанма май паракан çăл куç пулса тăнă вăхăтра пурăнатпăр. Паянхи ыйтусене хăйне май татса паракан, шухăшсене пурнăçа кĕртекен çамрăк профессионалсем паян пур сферăра та кирлĕ. Пирĕн республика çитес çулсенче мĕнле аталанасси шăпах вĕсенчен килет.

Республикăри 9,5 пин шкул ачишĕн юлашки шăнкăрав янрарĕ. Вĕсем валли пур çул та уçă: студентсен аудиторийĕсемпе наукăри çĕнĕлĕхсем, интереслĕ çул çӳревсемпе çĕнĕ паллашусем.

Тарăн пĕлӳ тата професси хăнăхăвне илсе аслă шкултан вĕренсе тухакан пиншер çамрăк кашни çул производствăна килет. Кашни çын яланах мĕн те пулин пĕрремĕш хут пурнăçлать. Аслă ăрурисене çакăн пек утăм тума опыт, ĕç хăнăхăвĕ, пĕлӳ пулăшать. Çамрăклăхăн вара ĕçе пурнăçлама çирĕп кăмăл тата ăнăçăва ĕненни пур. Чăваш Енре çамрăксене пулăшасси патшалăхăн приоритетлă енĕ пулса тăрать. Çамрăксен наука, пултарулăх тата ытти потенциалне хавхалантарма программăсем хатĕрленĕ. Вĕсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Эсир, çамрăк профессионалсем, производствăри ыйтусене хăвăр майлă çĕнĕлле татса паратăр. Çакă эсир вăй хуракан техника, экономика, социаллă тата бюджет сферисем ăнăçлă та тухăçлă аталанассине пĕлтерет.

Тивĕçлĕ специалистсене тупса палăртма тата вĕсене патшалăх службине явăçтарас тĕллевпе кăçалхи февраль уйăхĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи çамрăк кадрсен резервне йĕркелесси пирки калакан Указа алă пуснăччĕ. Унта çамрăк, хастар, вĕреннĕ, квалификациллĕ ертӳçĕсем кĕчĕç. Вĕсем обществăлла ĕçре те активлăхпа палăрса тăраççĕ. Паян вĕсем патшалăх политикине йĕркелесси çине витĕм кӳреççĕ, Чăваш Ен аталанăвне тӳпе хываççĕ.

Яшсемпе хĕрсем, хисеплĕ юлташсем! Çак уяв кунĕнче сире ăнăçу, савăнăç, сывлăх, çĕнĕлĕхсем уçма, çирĕп тĕллевлĕ, ырă малашлăхлă пулма сунас килет. Çамрăклăх – кашни çыннăн пурнăçĕнчех чи лайăх вăхăт. Çакă – романтика вăхăчĕ. Çын чунтан хавхаланать, идеалсем тата пурнăçри хăйĕн вырăнне шырать. Эпĕ Чăваш Енĕн çамрăкĕсене ĕненетĕп. Ĕçлĕр, пурăнăр, пурнăçпа савăнăр, çĕнĕ çӳллĕшсене парăнтарăр. Эсир – пирĕн вăй, пирĕн никĕс, пирĕн пуласлăх!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛĔ ÇАМРĂКСЕМ!**

Сире Раççей çамрăкĕсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Пирĕн пуласлăх, районпа республика малашлăхĕ çамрăксенчен, вĕсен хастарлăхĕпе пултарулăхĕнчен нумай килет. Çавăнпа та пирĕн, аслисен, çитĕнекен ăрăва мĕн пĕчĕкренех ырăпа усала уйăрма, пурнăçра тĕрĕс çул суйлама, яваплăха туйма вĕрентмелле. Çавăн чухне çеç çамрăксем пурнăçра хăйсен вырăнне тупĕç, пултарулăхне аталантарĕç, çĕр-шывшăн усăллă çынсем пулса тăрĕç. Сывă пурнăç йĕрки, культурăпа тавра курăма ӳстересси, спорта юратни те çамрăксен кулленхи пурнăç йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăмалла.

Районта вĕренӳре, ĕçре маттур, спортра хастар çамрăксем сахал мар. Малашне эсир ырă ĕçсем ытларах тăваса, хамăрăн пурнăçа лайăхлатассишĕн тăрăшасса, аслисен йăли-йĕркине тытса пырасса, малалла аталантарасса шанас килет. Çамрăк чухнехи кăмăл-туйăм, хастарлăх сирĕнте пĕрре те ан чактăр, пуçарулăх та иксĕлми пултăр. Район пуласлăхĕшĕн ĕçлес килнĕçемĕн ĕçлес килтĕр сирĕн.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, юрату, телей сунатăп. Ĕçре çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тумалла пултăр. Ĕмĕтленни çитсе пытăр, мĕн палăртни пурнăçлантăр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Саламлатпăр



Ивановка ялĕнче пурăнакан, «Колокольчик» ача садĕнче ĕçлекен **Елена Васильевна МИЛОВИДОВĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатпăр. Пурнăç çулĕ такăр та тумхахсăр килтĕр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пысăк та вырнаçуллă пулччăр, сывлăху çирĕп пултăр, эпир сана чĕререн юрататпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн.

**Салампа: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕ, ывăлĕ, çывăх тăванĕсем.**



Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăрăма, аттене, ывăлăма, шăллăма, пиччене, куккана – Кораккасси ялĕнче пурăнакан **Юрий Михайлович КАРАНДАЕВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Турри сана вăй-хал патăр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн – пысăк телей, савăнăç. Ырă кăмăлушăн, ĕçченлĕхӳшĕн юрататпăр сана. Пурăн эсĕ çĕр çул савăнса, пурнăç телейне туйса, мăшăрупа ачу-пăчуна савса. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, пур тăванусемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, Карандаевсен, Колесниковсен, Ефимовсен çемйисем.**

# Çĕр ыйтăвĕ – пĕлтерĕшлĕ ыйту

**Канашлуран**

Районти ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен июнĕн 25-мĕшĕнче ирттернĕ канашлăвне уçнă май район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, социаллă аталану енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Лилия Тарасова район çыннисен пай çĕрĕсене саккунлă майпа регистрацилессин ыйтăвĕ çине питех те пысăк тимлĕх уйăрма кирлине палăртрĕ.

– Паян район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе ирттернĕ планеркăра та район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев кун пирки тепĕр хут асăрхаттарчĕ, – терĕ вăл.

Вăхăчĕ хăвăрт иртсе пырать, саккунĕсем улшăнаççĕ. Анчах та хальхи вăхăтра ял çыннисен пай çĕрĕсен ыйтăвĕсене татса парассипе ĕçлемелли пайтах. Çавăнпах ĕнтĕ комиссипе ял тăрăхĕсене вырăна тухса тĕрĕслевсем ирттерессине, ял çыннисем пай çĕрĕсемпе, пĕршер гектара хушса çитерсе панă çĕр участокĕсемпе, арендăри çĕрсемпе мĕнле усă курнине палăртассине йĕркеленĕ. Çак ыйтусем çинче чарăнчĕ хăйĕн сăмахĕнче район администрацийĕн пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн пуçлăхĕ Илья Захаров.

Çĕр ыйтăвĕ нихăçан та çăмăл ыйту шутĕнче пулман. Ыйтăвĕ хăй тĕрлĕ ыйту çуратать. Пĕрисем пай çĕрĕсене регистрацилесе çитермен, теприсем ăна пăрахасшăн, тĕллевлĕ усă курманнисем те пур, пай çĕр хуçин пĕр шухăш, еткерĕсен вара тепĕр тĕрлĕ шухăш пулсан мĕн тумалла? Çав хушăрах тата шыв уçламалли башньăсене çирĕплетсе парассин ыйтăвĕсене те вырăнсенче татса парса пĕтереймен-ха. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене хумхантаракан тата канăç паман ыйтусене уçăмлатма тăрăшрĕ хăйĕн сăмахĕнче Илья Николаевич.

«Техника инвентаризаци бюровĕ» муниципаллă унитарлă предприяти пуçлăхĕ Владимир Калинин служба ĕçĕ-хĕлĕнче çитес вăхăтра улшăнусем пулса иртмеллине, полномочисем те улшăнассине асăнчĕ. Çавна май çĕр тата харпăрлăхпа çыхăннă ытти ыйтусене хальтерех татса парас пулать. Кунпа пĕрлех Владимир Аркадьевич халăхпа, вырăнти ял çыннисемпе тачăрах çыхăнса ĕçленин усси пысăккине палăртрĕ. Вырăнти депутатсене, старостăсене çак ĕçрен айккинче тăратса хăвармалла мар.

Канашлура тепĕр ыйту пирки те сăмах пулчĕ. Çитес кĕçнерни кунпа эрне кун кӳршĕллĕ Етĕрне районĕнчи Пĕрçырлан ял тăрăхĕнчи Сарьял ялĕнче Чăваш Республикинчи муниципаллă пĕрлешӳ пуçлăхĕн кунне ирттерме палăртнă. Унта пур районти кашни ял тăрăхĕн пуçлăхĕсемпе тĕп специалисчĕсем хутшăнаççĕ. Программăра тĕрлĕ ăмăртусем, конкурссем, вăййсем сахал мар. Муркашсем çак мероприятие активлă хутшăнма, ыттисем умĕнче хăйсене çӳллĕ шайра кăтартма тĕв турĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Республика кунĕн хыпарĕсем**

## Килĕшӳ çине алă пуснă



Июнĕн 24-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш Республикипе СНГ, чикĕ леш енче пурăнакан ентешсен ĕçĕсен тата халăхсем хушшинче гуманитари енĕпе çыхăнса ĕçлессин федераллă агентстви (Россотрудничество) пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлесси пирки калакан Килĕшӳ çине алă пуснă.

Документа Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Россотрудничество ертӳçи Константин Косачев алă пусса çирĕплетнĕ. Церемоние çавăн пекех РФ Патшалăх Думин комитет председателĕн çумĕ Алена Аршинова, Чăваш Енри национальноç диаспорисен представителĕсем хутшăннă.

Килĕшӳре халăхсем хушшинчи экономика, культура, наукăпа информаци çыхăнăвĕсене аталантарассине палăртнă. Çакă Чăваш Республикинчи тата чикĕ леш енчи çĕр-шывсенчи организацисемшĕн те пĕлтерĕшлĕ. Вăл чикĕ леш енче Чăваш Енĕн культурăпа истори пуянлăхне сарма, вырăс чĕлхипе Раççей вĕрентĕвне аталантарма май парать.

## 60 хваттерлĕ çурт хута кайрĕ



Июнĕн 24-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Ишлей ялĕнче 60 хваттерлĕ пурăнмалли çурт хута кайрĕ. Унти 29 хваттерне граждансене республикăн «Переселение граждан из ветхого и аварийного жилищного фонда, расположенного на территории Чувашской Республики» тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн уйăрса параççĕ.

Хваттерсен уççисене тивĕçнисене Чăваш Ен Пуçлăхĕ саламларĕ, строительсене хăйсен ĕçне ответлăха туйса пурнăçланăшăн тав турĕ.

Çӳлте асăннă программа пурнăçа кĕме пуçланăранпа республикăра 24,4 пин тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута каймалла, 1000 çын ытла хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатĕ.

## Çĕнĕрен çĕнĕ километрсем

Июнĕн 24-мĕшĕ Шупашкар районĕнчи Турикасси, Мăн Мамăш, Чаканар, Аначкасси, Пранькка ялĕсенче пурăнакансемшĕн Республика кунне уявланипе пĕрлех тепĕр пĕлтерĕшлĕ самантпа та яланлăхах асра юлĕ. «Чувашавтодор» тăрăшнипе çак кун асăннă ялсем хушшинче асфальт сарнă хăтлă çула хута ячĕç. Çул тăршшĕ 3 километра яхăн. Ял çыннисен тахçантанпах кĕтнĕ ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ. Унччен çул çуккипе тертленнĕ пулсан, халĕ ку ялсем хушшинче автобус маршручĕ уçăлчĕ.



Асăннă çула «Чăваш Республикинче 2006–2010 çулсенче тата 2025 çулчченхи прогнозпа автомобиль çулĕсене модернизацилесси тата çĕнĕрен тăвасси» республикăри тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн тунă, кăçал ăна валли республика бюджетĕнчен 21,378 миллион тенкĕ уйăрнă.

Çул уçнă çĕре республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та хутшăнчĕ. Ял çыннисем хăйсен савăнăçне пытараймарĕç, ĕçсене пахалăхлă пурнăçланă строительсем ячĕпе тав сăмахĕсем янăрарĕç.

## Çĕнĕ ача сачĕ уçăлчĕ

Шупашкарти «Волжский-3» микрорайонта ача сачĕ уçăласса тахçантанпах кĕтнĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче тинех çак вăхăт çитрĕ. Çавна май ăна уçнă çĕре ачасем кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем те çемйисемпех пуханнă.

200 № «Эрудит» ача сачĕ чăннипех те илĕртӳллĕ. 3 хутлă хăтлă ача сачĕ 215 ача йышăнма хатĕр. Вĕсемпе 24 воспитатель ĕçлеме пуçăнать. Шкул çулне çитмен ачасен асăннă çак учреждение «Чăваш Республикинче 2011–2012 çулсенче шкул çулне çитменнисен вĕрентӳ системине аталантарасси» подпрограммăпа килĕшӳллĕн çулталăк хушшинче туса



пĕтернĕ.

Ачасене çак савăнăçлă самантпа саламлама Раççей Патшалăх Думин Вĕрентӳ комитечĕн председателĕн çумĕ Алена Аршинова, Чăваш Енри Тĕп федераллă инспектор Геннадий Федоров, хула ертӳçисем килнĕ.

Ача садне уçнă çĕрте республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çакна палăртрĕ. Ку вăл юлашки 20 çул хушшинче республикăра çĕнĕрен пуçăнса тунă пĕрремĕш ача сачĕ. Унччен ача сачĕсене юсанă е реконструкци тунă. 2012–2014 çулсенче вара шкул çулне çитмен ачасен 25 вĕрентӳ учреждение çĕнĕрен çĕклеме, 4 пристрой тума палăртнă. Унччен ача сачĕ пулнă 19 çурта вара ачасем валли каялла «тавăрма» пăхнă.

## Яш-кĕрĕмпе тĕл пулнă

Шупашкарти «Время стратегических новаций» пиллĕкмĕш экономика форумĕн шайĕнче июнĕн 22-мĕшĕнче паллă экономист, «НЕКОН» эксперт консультаци компанийĕн президенчĕ Михаил Леонидович Хазин çамрăксен представителĕсемпе тĕл пулнă.

Пĕр-пĕрин хушшинчи калаçăва «Çĕнĕ экономика условийĕсенчи çамрăксен вырăнĕ» темăпа йĕркеленĕ. Хăйĕн докладĕнче Михаил Хазин кĕскен тĕнчери финанс кризисĕн, кредитсемпе тивĕçтерессин тытăмĕн ыйтăвĕсем, ку сферăри Нобель лауреачĕсем çинче чарăнса тăнă. Çавăн пекех вăл экономикăн хальхи модельне çĕнетмеллине, лекнĕ лару-тăруран хăвăртрах тухма кирлине палăртнă. Паллă экономист çамрăксен нумай ыйтăвĕсене хуравланă.

## Вăрнарсем таса шыв ĕçĕç

Çулталăк хушшинче Вăрнарта шыв тасатмалли хальхи станцие хута яма пултарнă. Таса шыв кунтан районăн пур кĕтесĕсене те саланать. Çĕнĕ объекта ĕçре тĕрĕслесе пăхма Вăрнара РФ Регионсен аталанăвĕн министерствин пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх департаменчĕн директорĕн çумĕ Владимир Мешков тата Чăваш Ен строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Владимир Громов килнĕ.

Çĕнĕ станцие кăçал çуллах хута ямалла. Халĕ тирпей-илем кĕртес ĕçсем пыраççĕ.

Хута каякан çак объектăн ĕç тухăçлăхĕ 2,5 пин кубла метр. Ку вăл пĕрремĕш тапхăр кăна. Татах 87 километр шыв пăрăхĕсем хума пăхнă. Çакă 41 яла таса шыв парса тăма май парĕ. Ĕçсен пĕтĕмĕшле хакĕ 200 миллион ытла тенкĕпе танлашать. Малашлăхра вара çак схемăпах станцин тепĕр черетне хута яма пăхнă. Вăл 6 пин кубла метр таса шывпа тивĕçтерĕ.

Делегаци çав кунах Шăмăршă районĕнче те пулнă. Кунта та шыв тасатассипе тепĕр пысăк инвестици проекчĕ пурнăçа кĕрет.

*Чăваш Республикин Пуçлăхĕн УКАЗĔ*

### Чăваш Республикинче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенче ĕçлекен çамрăк вĕрентекенсене пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх пулăшăвĕ памалли мерăсем çинчен

Чăваш Республикинче çамрăк вĕрентекенсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисене ĕçлеме явăçтарма майсем туса парас тата вĕсене пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне татса панă чухне патшалăх пулăшăвĕ парас тĕллевпе çапла **йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенки шутĕнчен тивĕçтермелле тесе палăртас:

Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле пуçламăш, пĕтĕмĕшле тĕп тата пĕтĕмĕшле вăтам (тулли) пĕлӳ паракан вĕренӳ программине пурнăçлакан патшалăхăн вĕренӳ учрежденийĕсенче тата муниципалитетăн вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕçлекен, палăртнă йĕркепе пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма кирлĕ тесе йышăннă 35 çулччenхи çамрăк вĕрентекенсем (малалла – çамрăк вĕрентекенсем) пурăнмалли çурт-йĕр туянма е тума кредит организацийĕсенчен явăçтарнă ипотека кредичĕсем енĕпе процентсем тӳленипе пулакан тăкаксен пĕр пайне, çавнашкал кредит договорне тунă кунран пуçласа 10 çул хушши таран, çулталăкри 4 процент виçепе саплаштарассине;

çамрăк вĕрентекенсем пурăнмалли çурт-йĕр туянма е тума кредит организацийĕсенчен явăçтарнă ипотека кредичĕсем енĕпе малтанхи тӳлевсене тӳлеме ипотека кредичĕн калăпăшĕн 20 проценчĕ чухлĕ виçепе субсиди уйăрса парассине.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн:

икĕ уйăх хушшинче туса хатĕрлемелле тата çирĕплетмелле:

Чăваш Республикинче 2011–2020 çулсенче вĕренĕве аталантарас енĕпе йышăннă республикăн тĕллевлĕ программин «Чăваш Республикин пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденийĕсенче ĕçлекен çамрăк вĕрентекенсене 2012-2020 çулсенче пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси» çум программине;

çамрăк вĕрентекенсем пурăнмалли çурт-йĕр туянма е тума кредит организацийĕсенчен явăçтарнă ипотека кредичĕсем енĕпе процентсем тӳленипе пулакан тăкаксен пĕр пайне саплаштармалли тата ипотека кредичĕсем енĕпе малтанхи тӳлевсене тӳлеме субсиди уйăрса памалли йĕркене туса хатĕрлемелле;

2012 çулта тата ытти çулсенче çак Указа пурнăçлама Чăваш Республикин республика бюджетĕнче укçа-тенкĕ уйăрса хăвармалла.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çак Указа пурнăçланă шайра тăвакан пурăнмалли çурт-йĕр строительстви валли çĕр лаптăкĕсем уйăрса парассине тивĕçтерме сĕнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2012, çĕртме, 21, 69 №.

**Объявление**

## К сведению бытовых потребителей электроэнергии!

Постановлением Государственной службы Чувашской Республики по конкурентной политике и тарифам от 15 ноября 2011 г. № 40-15/э "Об установлении тарифов на электрическую энергию, поставляемую населению и приравненным к нему категориям потребителей, по Чувашской Республике" (зарегистрировано Министерством юстиции Чувашской Республики 12 декабря 2011 г., регистр. № 1021) утверждены тарифы на электрическую энергию, поставляемую ОАО "Чувашская энергосбытовая компания", на 2012 год для населения и потребителей, приравненных к категории население.

С 1 июля 2012 года будут применяться следующие тарифы на электроэнергию для населения Чувашской Республики, проживающего:

- в сельских населенных пунктах – 1,53 руб./кВт•ч;
- в городских населенных пунктах:

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами и (или) электроотопительными установками, – 1,53 руб./кВт•ч;

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными газовыми плитами, – 2,19 руб./кВт•ч.

С полным тарифным меню можно ознакомиться на сайте ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» http://www.ch-sk.ru/ в разделе «Актуально/Тарифы на электроэнергию для населения на 2012 год».

ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» просит предоставить показания приборов учета электроэнергии по состоянию на 01 июля 2012 года.

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания»**

# Электронлӑ майпа усӑ курни меллĕ

## Патшалӑх услугисем

Халӑха кӳрекен патшалӑх тата муниципаллӑ услугӑсен пахалӑхне меллĕрех те пахалӑхлӑрах йĕркелесе ярасси паянхи куна та, малаллахи тапхӑршӑн та пĕлтерĕшлĕ ыйту пулса тӑрать. Услугӑсемпе тивĕçтерессине электронлӑ май çине куçарасси – ыйтӑва татса парассин пĕр пысӑк пайĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин хӑй ĕçлеме пуçласан кӑларнӑ указсенчен пĕринпе влаç органĕсем умне çакӑн пек задача лартрĕ: 2018 çул тĕлне патшалӑх тата муниципаллӑ услугӑсемпе усӑ куракансен пайĕ çынсен 70 проценчĕ чухлĕ пулмалла.

Чӑваш Республикинче услугӑсемпе электронлӑ майпа тивĕçтерессипе çине пысӑк тимлĕх уйӑраççĕ. Патшалӑх услугисен пĕрлехи порталĕ çинче (gosuslugi.ru е 21. gosuslugi.ru) халĕ республикӑра пурӑнакансем федераллӑ услугӑсемпе кӑна мар, республикӑри тата муниципаллӑ 19 услугӑпа та усӑ курма пултараççĕ. Çулталӑк вĕçне услугӑсен тĕсĕ 63 çитмелле. Паянхи куна порталпа усӑ куракан 9 пин çынна яхӑн регистрациленĕ. Вĕсем портала федераллӑ услугӑсемпе çыхӑннӑ 24 пин ыйтупа, регионпа муниципаллӑ услугӑсемпе çыхӑннӑ 140 ыйтупа тухнӑ. Федераллӑ услугӑсенчен ытларахӑшĕ Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортне, ют çĕр-шыва каймалли паспорт, водитель удостоверенине илессипе, налук парӑмĕсене тĕрĕслессипе, транспорта техосмотр тӑратассипе тата регистрацилессипе, РФ Пенси Фондĕнчен сведенисем илессипе тата ыттипе çыхӑннӑ. Регион услугисенчен ытларахӑшĕ – ЗАГС органĕсем паракан услугӑсем.

Услугӑсемпе электронлӑ майпа усӑ курас тесен чи малтанах услугӑсен пĕрлехи порталĕ урлӑ заявлени çырмалла. Унта даннӑйсене ĕç тӑвакан кирлĕ органа е вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органне çитереççĕ. Заявлени çырнӑ çыннӑн малтанах харпӑр хӑйĕн пӳлĕмне йĕркелемелле (личный кабинет), унта ыйтнӑ даннӑйсене çырмалла. Малашнехи ĕçе е «Почта России» (хӑвӑрӑн почта адресне çырмалла), е «Ростелеком» (хӑвӑрпа пĕрле паспорт, СНИЛС илсе Шупашкар хули, Гагарин урамĕ, 20 а çурта çитмелле) урлӑ пурнӑçлассине пĕлтермелле. Индивидуаллӑ предпринимательсем порталти услугӑсемпе хӑйсен электронлӑ алӑ пусни (Раççейри федераллӑ налук служби çирĕплетни) урлӑ усӑ курма пултараççĕ.

**Пичете ЧР Информаци политикипе массӑллӑ коммуникацисен министерствин материалĕ тӑрӑх хатĕрленĕ.**

## Шалти ĕçсен пайĕ пĕлтерет

# Выльӑх вӑрлаççĕ. Асӑрханӑр!

Юлашки вӑхӑтра республикӑра выльӑх вӑрланӑ тĕслĕхсем пулса иртрĕç. Нумаях пулмасть акӑ Етĕрне районĕнчи фермӑран пĕр теçеткене яхӑн вӑкӑр çавӑтса кайнӑ. Хыççӑнах кун майлӑ тĕслĕх Шупашкар районĕнче пулса иртнĕ. Кайран – каллех Етĕрне районĕнче (пирĕн районпа чикĕлле вырнаçнӑ ялтан).

Вӑрӑсем обществӑлла выльӑха витесенчен картишне кӑларнипе усӑ кураççĕ. Çавӑнпа фермӑсенче хуралçӑсен ĕçне вӑйлатмалла, çĕрлехи вӑхӑтра та выльӑха куçран вĕçертмелле мар. Кун пирки районти ял хуçалӑх предприятийĕсен ертӳçисемпе калаçу пулнӑ ĕнтĕ. Çакӑнпа пĕрлех вара уйрӑм кил хуçалӑхсенче те тимлĕ пулма ыйтатпӑр. Çĕр каçа хӑвӑра лӑпкӑ туяс тесен выльӑхсене хупнӑ вите алӑкĕсене лайӑх питĕрĕнмелле тӑвӑр. Пӑрусене çул хĕррисене кӑкарма ан тӑрӑшӑр. Вĕсем куç умĕнчех пулччӑр.

Ялта пачах пĕлмен-палламан çынсене курсан хӑйсене те, вĕсен транспорт хатĕрне те ас туса юлма тӑрӑшӑр (номерне çырса хурсан та юрать). Хӑрушӑ лару-тӑру сиксе тухсан çийĕнчех Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн дежурнӑй чаçне 62-6-67 е 02 номерсемпе шӑнкӑравласа пĕлтерĕр. Çĕрлехи вӑхӑтра кашни ялтах каçхи хуралӑн ĕçне йĕркелемелле. Çакӑ вӑрӑлла ĕçсене асӑрхаттарма май панипе пĕрлех ялта пушар хӑрушлӑх тухассине те асӑрхаттарма пулӑшĕ.

**РФ Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕ.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Никольская Фаина Афельевна, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, проспект Тракторостроителей, д. 39, кв. 101.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Новая Юнга», земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:080201, общей площадью 1,58 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Васильева Татьяна Ивановна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 6. Васильев Николай Никифорович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 6. Дмитриева Галина Семеновна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Полевая, д. 2. Дмитриев Иван Иванович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Полевая, д. 2.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:200102.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Андреев Андрей Зосимович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Сяран-Сирма, ул. Зеленая, д. 29. Андреева Валентина Якимовна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Сяран-Сирма, ул. Зеленая, д. 29.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:200401, общей площадью 2,82 га и 1,41 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Ярдыков Генри Александрович, адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, проспект Тракторостроителей, д. 28, кв. 121.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:200701, общей площадью 2,82 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Кирпичников Андрей Георгиевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хоп-Кибер, ул. Онис-Эки, д. 36.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:021001, общей площадью 1,34 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:080901:2, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Иштудова Людмила Павловна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Молодежная, д. 11.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:080901:2. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Новая Юнга», земельный участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:080901, общей площадью 1,58 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Попкова Зоя Гавриловна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Магазейная, ул. Молодежная, д. 72. Попков Александр Васильевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Тябакасы, ул. Полевая, д. 55.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:021001, общей площадью 1,34 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Иванов Владимир Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Магазейная, ул. Молодежная, д. 72. Иванов Анатолий Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Магазейная, ул. Молодежная, д. 72. Иванова Галина Алексеевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Магазейная, ул. Молодежная, д. 72. Иванов Василий Алексеевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Магазейная, ул. Молодежная, д. 72.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:021001, общей площадью 1,34 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика. с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР** 7-10.
**ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 4-20.

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева продает сено в рулонах. Тел.: 62-1-97.**

* * *

**Требуются водители на самосвал. Тел.: 8-919-669-50-06.** 1-2.

* * *

**Продаю двухкомнатную квартиру в отличном состоянии, частично с мебелью. 1 200 000 руб. Торг уместен. Тел.: 8-919-653-15-53.**

* * *

**Отдам даром сено, трава скошена, д. Пикикасы. Тел.: 8-903-064-50-17. Сергей.**

* * *

**Утерянный аттестат А № 6224871, выданный МБОУ «Юськасинской СОШ» в 2000 году на имя Ивановой Натальи Владимировны, считать недействительным.**

* * *

**КУПЛЮ КВАРТИРУ. Обращаться по тел.: 63-1-19, 8-927-668-51-67.** 2-2.

* * *

**Продаем комбикорма. Тел.: 8-927-843-52-40.** 4-5.

* * *

**Продаю или меняю комбайн «Нива» на трактор Т-25. Тел.: 8-909-305-71-77.**

* * *

**Моргаушское райпо предлагает к сдаче в аренду нежилые помещения под офис площадью 8,25 и 33 кв. м., расположенные по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4 ( Дом быта, 2-ой этаж). Обращаться по тел.: 8(83541)62-1-93, 62-2-88, 62-9-40.** 1-2.

* * *

**Тюкланӑ утӑ сутатпӑр. Тел.: 8-937-379-11-96.**

* * *

**Продаю песок речной, ОПГС с доставкой. Тел.: 44-01-10.** 2-10.

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА И НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 6а (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64.** 8-10.

## Прогноз погоды

| | среда 27 июня | | | | четверг 28 июня | | | | пятница 29 июня | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +19 | +24 | +29 | +21 | +19 | +21 | +19 | +17 | +16 | +19 | +22 | +17 |
| Давление мм | 742 | 740 | 741 | 740 | 740 | 739 | 740 | 740 | 741 | 741 | 742 | 742 |
| Влажность % | 72 | 62 | 45 | 80 | 97 | 81 | 89 | 94 | 98 | 78 | 58 | 87 |
| Ветер м/сек | 5 | 6 | 5 | 2 | 2 | 3 | 2 | 2 | 2 | 2 | 1 | 1 |
| | Ю-В | Ю | Ю | З | С-В | Ю | Ю-В | З | С-З | С-З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 04:09 | 21:43 | | | 04:09 | 21:42 | | | 04:10 | 21:42 | |
| Луна восход / заход | | 13:44 | 00:00 | | | 15:08 | 00:19 | | | 16:33 | 00:42 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
**Замер.**
**Доставка бесплатно.**
**Низкие цены.**
**Тел.: 8-987-576-65-62.** 6-10.

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1

Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта повар пулса ĕçлекен О. Казаковӑн ашшĕ

**Виталий Валерианович**
**ЕФРЕМОВ**

вилсе кайнӑ пирки унӑн çемйипе пĕрле тарӑннӑн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чӑваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чӑваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплӑ секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнӑç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллӑ пурнӑç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхӑну, информаци технологийĕсен тата массӑллӑ коммуникаци сферине пӑхса тӑракан Федераллӑ службӑн Чӑваш Республикипе – Чӑваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавӑн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калӑпӑшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырӑвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавӑрса памаççĕ, 2 страницӑран пысӑкраххисене йышӑнмаççĕ.
Рекламӑпа пĕлтерӳсен чӑнлӑхĕшĕн вĕсене паракансем яваплӑ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шӑмат кунсерен тухать.
Номер дежурнӑйĕ Белов А.П.
Пичете панӑ 26.06.2012 ç.
Пичете памалли вӑхӑт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чӑннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4635.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.